*Чăваш тĕррин кунне халалласа*

# Тĕрĕ тĕнчи

Чăвашăн ӳнерĕ чылай та пуян,
Пĕр тĕслĕхĕ унăн – илем-эрешсем.
Ытти ӳнерсем пек пĕр танлăн ӳссе,
Эрешĕн илемĕ пырать сарăлса.

Чăвашăн тĕррийĕ – илемлĕх тĕнчи,
Хитрелĕхĕ унăн куҫа илĕртет.
Еткерлĕх управĕ вăл – тĕрĕ тĕнчи,
Эреш ăстисем маҫтăрри сисĕнет.

Чĕре хĕлĕхне хускатан эрешсем
Ламран лама куҫнă йăха-несĕле.
Кашни тĕрĕре пур расна символсем,
Ăс-хакăл ҫӳпҫи палăрать вĕсенче.

Чăваш хĕр упраҫĕ тĕс туйăмсене
Пĕлсе усă курнă хăйсен ĕҫĕнче.
Суйланă ҫипне ҫут ҫанталăк тĕсне,
Ăна ҫыхăнтарнă пурнăҫ паллипе.

Чăваш тĕрринче килĕшӳ сисĕнет,
Эрешĕсенче чун кĕвви янăрать.
Кашни паллăна вырнаҫтарнă пĕлсе,
Тĕнче тытăмне ăнланни курăнать.

Асамлăх тĕнчи пек чăвашăн тĕрри,
Паха тупра евĕр пурнать чĕрере.
Унта палăрать тăван халăх шăпи,
Ăна «вуласа» ăнланма пĕлмелле.

Ытарлă, илемлĕ чăваш тĕррипе
Чăнах мухтанатпăр тĕнче шайĕнче.
Тĕпчеҫҫĕ ăна ют ҫĕр-шыв ҫыннисем,
Ҫĕр пин тĕрĕпе киленеҫҫĕ вĕсем.

Хальхи вăхăтри тĕрĕҫсем те ăста,
Кĕртеҫҫĕ нумай ҫĕннине тĕрĕре.
Чăваш тĕррисем тыткăнлаҫҫĕ пире,
Аваллăх еткерĕ упрантăр ялан.

24.11.2020.

Светлана Яруткина,
Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Хусанушкăнь тĕп шкулĕнче
чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен.